


Тĕрлĕ тĕслĕ хăмпă, таса та тирпейлĕ пÿлĕмсем, хаваслă юрă-кĕвĕпе тулнă зал - çакăн пек ÿкерчĕкпе кĕтсе илчĕ хăйĕн студенчĕсене, вĕрентекенĕсене, хăнасене Мускав патшалăх машиностроени университечĕн филиалĕ - Шупашкарти политехника институчĕ авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче. Пĕлÿ кунĕ вĕренÿ заведенийĕшĕн тĕп уяв пулнине кура сумлă хăнасем те йышлăн килнĕ. Вĕсенчен пĕри - Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Асăннă вузра - 5 факультет, вĕсенче пурĕ 10 направленипе професси алла илме май пур. Пĕрремĕш курса вĕренме кĕнĕ 153 студентран 113-шĕ куçăнлă мелпе пĕлÿ илĕ. Инженерипе çыхăннă факультетсене кĕрекенсен йышĕнче физикăпа ППЭре 70 балл пухнисем те пурри савăнтарать аслă шкул ертÿлĕхне. Пĕтĕмĕшле илсен института кăçал вĕренме кĕнисенчен Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕнче чи лайăх кăтартулли 250 балл

пухнă. Институт студенчĕсен географийĕ анлă: пурĕ кунта 36 регионран.

Аслă шкулăн директорĕ - Александр Агафонов студентсемпе преподавательсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăнăçу суннă май ертӳлĕх вĕсене пурне те кунта хăтлă пултăр тесе хăйĕнчен мĕн килнине пурнăçлама шантарчĕ.

Михаил Игнатьев асăннă институтра хатĕрлекен специалистсем малашне çĕр-шывăмăра тата та ытларах кирлĕ пулассине, çавна май тӳлевсĕр вĕренме квота нумайланассине пĕлтерчĕ. Инноваци вĕренĕвне хута яма пултарни вĕренекенсен професси аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Ăста специалистсем вара ĕçсĕр юлмасса шантарчĕ: паян чылай предприятире тивĕçлĕ кадрсем çитмеççĕ. Института тин ура ярса пусакансем вара хăйсенчен мĕн кĕтнине пурнăçлама сăмах пачĕç.

Пĕлӳ кунĕпе асăннă аслă шкул коллективне, кунта вĕренекен хĕр-каччăн ашшĕ-амăшне ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов, Шупашкарти арçынсен мăнастирĕн настоятелĕ Василий архимандрид та саламларĕç. Чăваш Ене 20 çул каялла пĕрремĕш хут килнĕ те кунтах тĕпленнĕ православи тĕнне çирĕп пăхăнса пурăнакан француз çамрăксене çапла ырă сунчĕ: "Кунта юлнишĕн эпĕ пĕртте ӳкĕнместĕп. Çак çĕре, унăн çыннисене юратрăм та вĕсен пăшăрханăвĕ-савăнăçĕпе сывлатăп. Чи малтанах хăвăра юратмалла, хĕвел енне туртăнмалла, илеме курмалла. Çавăн пек чухне чăн-чăн çын пулаятăр..."

* * *


С ДНЕМ ЗНАНИЙ!
ЧГУ имени И.Н.
Информатики и вычислительной техники факультет